Ч(Чув)
88
34367

Галина, Ирина, Алина, Алёша
ЗОТОВЫ

# ÇЕМЬЕ КĂШĂЛĔ ЮМАХСЕМ



Чебоксары - 2000

ациональная библиотека ЧР
4-037367
Обязат. экз.

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

К С(Чув) 388

*Книга отпечатана на средства спонсоров Красночетайской районной администрации во главе Валерия Гурьевича Орлова.*

*Авторы выражают особую признательность и благодарность за народно-просветительскую деятельность района.*

ПРОВЕРЕНО
2-10

© Зотовы, 2000

4-37367
Национальная библиотека Чувашской Республики

К 84.09(=чув)6-446



Галина Зотова

# ТĔП ТУРĔÇ

Пĕр карчăкпа старик ватлăхра ывăл ача çуратнă, ытти ачасенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман вăл. Юрланă, савăннă, вылянă-кулнă. Пĕррехинче арçын ача тус-тантăшĕсемпе çывăхри вăрмана çырлана каять, хайхисем çул çинче пĕр юшкăнлă вырăна çитсе тăчĕç тет. Тус-тантăшĕсем юшкăнран пăрăнасшăн пулаççĕ, Фриц итлемест, çырма урлă пĕчченех çул тытать. Çырмаран тухнă çĕре унăн урине темскер çыпçăнса ларать, пăхать юшкăнпа пĕрле ури тупанне хĕрес евĕрлĕ тимĕр татăкĕ çыпçăннă. Хăйпăтасшăн пулса темĕн те туса пăхать, тимĕре уринчен хăйпăтаймасть, çыпçăнмаллипех çыпсăнса ларнă.

Фриц кăмăлĕ çак самантран пуçласа улшăнать те. Мухтанма, каçăрăлма пуçлать, епле-ха мухтанмăн: никамăн та Фрицăн пек тупра çук-çке, пĕр ăна çеç çут çанталăк уйăрса пăхать, ăна çеç тимĕр тăпра парнеленĕ!

Фрицшăн мĕн пур тĕнче хура тĕспе витĕнет, ăсĕ-тăнĕ улшăнать ачан, хăйне пуринчен чапли тесе шутласа мĕн пур тĕнчене, мĕн пур халăха хăйне пăхăнтарма ĕмĕтленсе çула тухать (васканипе ашшĕ-амăшĕпе те сывпуллашмасть).

Пĕрре ярса пусать, хула ун ури айне пулса арканать, тепре пусать – ял çунать. Вут-хĕм сирпĕнет, пуля-снаряд вĕçет, ача-пăча аманать, çын тăкăнать, вăрман çунать. Ял-ял урлă, хуласемпе çĕршывсем урлă каçрĕ тет хаяр тăшман, шав малалла талпăнать тет. Ăна пулăшма тимĕр лаптăк ытамне лекнă тусĕсем пухăнчĕç тет. Вăл вĕсене укçа парать, эрех ĕçтерет тет. Пин-пин хулапа яла çĕр пичĕ çинчен шăлса ыватрĕ фашист, вутлă вăрçă хирĕнче хăй çĕнтернипе мăнаçланнăçен мăнаçланса пырать тет, кĕçех Патша шайне ларма ĕмĕтленет тет.

Çак вăхăтра аслă Атăл хĕрринче пĕр карчăкпа старикĕн ывăл çуралнă. Ача кунсерен мар, сехетсерен ÿссе çитĕннĕ тет, Улăп паттăр пулса тăчĕ тет. Халăх нушине курсан, Улăп паттăр ăна пулăшма шутларĕ тет.

Алла хĕç-пăшал тытса, ашшĕ-амăшĕнчен пил илсе çула тухать. Таса уя тухать, çут çанталăк тусĕсене хăй патне чĕнет.

Пуринчен малтан Улăп патне Хĕвел анне çитрĕ тет.

- Мĕн кирлĕ сана, ывăлăм?

- Тăшман ман халăха тĕп тăвасшăн, эпĕ ăна хăтарасшăн. Эсĕ мана пулăшаймăн-ши?

- Хаваспах пулăшатăп.

Хĕвел хăй хăватне (çĕр аннепе канашланă хыççăн) совет салтакĕсене парнелерĕ тет. Салтаксем, вăй кĕнине кура, хастартарах çапăçма пуçларĕç тет, тăшмана парăнтарма пуçларĕç тет.

Юханшывсем те Улăп паттăра пулăшрĕç, тăшмана малалла кайма памарĕç, уйрăмах ку енĕпе Атăлпи хастар пулчĕ, Фриц тусĕсене шыва путарчĕ, тинĕселле юхтарчĕ.

Хĕл Мучи те тусĕсене пулăшма çитрĕ. Çил-тăман çĕкленчĕ, юр çăвать, пит-куçа чĕпĕтет, ал-урана шăнтать, чуна çÿçентерет; нимĕç серепене лекрĕ, утасшăн – утаймасть, чупасшăн – чупаймасть; алли-ури шăнса ларчĕ, алри пăшалĕ тухса ÿкеть, чĕтремеллипех чĕтрет, чунĕ чĕрне вĕçне çитрĕ, чĕри тухса тарасла тапать, вăйĕ пĕтрĕ, сехри хăпса тухрĕ, тăсăлса ÿкрĕ çĕр çине, тем пек тăрăшсан та Фриц Мускава çитеймерĕ тет, пур çук вăйне пухса, уксахла-уксахла каялла чака пуçларĕ тет.

Аслă Улăп Хĕл мучие тав турĕ.

- Кирлĕ пулсан татах чĕн, пулăшма яланах хатĕр, - сыв пуллашрĕ Хĕл мучи Улăп паттăрпа.

Çĕнтерме çăмăлах пулмарĕ. 4 çула яхăн тăсăлчĕ хаяр вăрçă. Анчах та, Улăп паттăр, шанчăклă тусĕсем пулăшнипе, Фрица çĕнтерчĕ, мĕн пур халăха ирĕке кăларчĕ.

Çу уйăхĕнче Фрицăн ура тупанĕнчи тимĕр татăкĕ хăйпăнчĕ тет, ирĕлсе çунса кайрĕ тет. Тăшмансем çĕр питĕнчен тасалчĕç, шăммисем кĕлленчĕç.

## АСАМЛĂ АЛĂ

Пĕр хĕрарăмăн 4 ача пулнă тет: икĕ хĕрпе икĕ ывăл: Хĕл – паттăр, Çурпи, Çуллапи тата Кĕр – паттăр.

Хĕл-паттăр питĕ хаяр пулнă тет. Пĕр сăлтавсăрах кўллешме юратнă, çилленсе кайсан ниепле те чарма çук тет, çавăрттарать кăна пўртри япаласене айăн-çийĕн. Чĕр чунсене курайман тет. Вĕсем ăна курсан хăранипе хăйсен шăтăкĕсене тарса пытаннă тет. Кайăксене чулпа пенĕ, кайăксем те ăна курсан аяккалла вĕссе тараççĕ тет.

Çурпи ăшă кăмăллă, питĕ хитре пулнă тет, симĕс çўçлĕ, кăвак куçлă, чечексемпе выляма, улăх-çаран тăрăх çарран чупма юратнă тет.

Çуллапи тутлă çиме юратнă. Çырла-панулми кăмăлланă, хăяр-помидорне те тиркемен тет. Питĕ ĕçчен пулнă тет, кăвайт чĕртсе апат-яшка пĕçернĕ, хăш-пĕр чухне кăвайтне сўнтерме те манать тет.

Кĕр-паттăр та апат тавраш не тиркемен, уйрăмах çĕр улми çинĕ, слива компотне ĕçме юратнă. Каччă питĕ хитре тумланнă, костюмĕ сарă, кĕпи хĕрлĕ, туфлийĕ хăмăр… Кĕр-паттăрăн кăмăлĕ тĕрлĕрен – лайăх чухне чиперех, анчах та пĕр йĕме пуçласан ниепле те чарма май çук, - йĕрет те йĕрет пĕр вĕçĕмсĕр.

Вилес умĕн амăшĕ ачисене хăй тавра пуçтарчĕ тет. Вĕсене пĕр пы-ы-сăк ала парнелесе хăварать, кашнинех çак алапа виçшер уйăх хушши усă курма хушса хăварать тет.

Чи малтанах алапа аслă пиччĕшĕ Хĕл-паттăр усă курать. Вăл аланăçемĕн çĕр çине шурă тăкăнать, çĕр самантрах шурă çивиттипе витĕнет. Хĕл-паттăр ала тытнине курсанах чĕр чунсемпе кайăксем тарса çухалаççĕ тет. Хĕл-паттăртан хăранипе. Хăш-пĕр чухне Хĕл-паттăр алапа чи-

перех аллать, анчах та ҫилленсен алари ҫӑнӑх та ҫавӑрӑнать кӑна.

Ҫурпин алапа усӑ курмалли вӑхӑт ҫитет, анчах та Хӗр-паттӑр алана ниепле те хӑй аллинчен вӗҫертесшӗн мар, аллать те аллать пӗр вӗҫӗмсӗр, аран-аран ӳкӗте кӗртет Ҫурпи хӑйӗн пиччӗшне алана хӑйне пама.

Ҫурпин кӳреннипе куҫӗнчен куҫҫуль тухать, ҫӗр ҫине те ала витӗр тӑкӑнаҫҫӗ куҫҫуль тумламӗсем.

Ҫурпи алапа аллама тытӑнсан ҫӗр ҫине чечек-курӑк тӑкӑнать, чӗр чун-кайӑксем тинех хӑйсен килне таврӑнаҫҫӗ тет.

Нумаях усӑ курма пӳрмен-мӗн Ҫурпине алапа. Черет Ҫуллапине ҫитнӗ иккен. Ачасем! Юмаха пӗрле вӗҫлер-и?

## ҪУЛҪУРЕВҪӖ АСЛАТИ

Пурӑннӑ, тет, сӗм вӑрманта аслати. Хирсемпе вӑрмансем, ялсемпе хуласем тӑрӑх ҫӳреме юратнӑ. Урипе тимӗр е чул ҫине пусмассерен ҫутӑ тухнӑ - ҫиҫӗм ҫиҫнӗ. Йывӑр утти кӗмсӗртетнӗ – аслати аватнӑ. Ҫапӑннипе е такӑннипе алли-ури ыратнӑран макӑрнӑ - ҫумӑр ҫунӑ.

Ҫул ҫӳресе ывӑннӑ аслати канма ларсан е выртсан ҫеҫ ҫумӑр ҫума та, кӗмсӗртетме те чарӑннӑ, ҫиҫӗм те ҫиҫмен.

Пӗчӗк тусӑмсем, килӗшрӗ-и сире юмах? Сире эпӗ «Асамлӑ пукане» юмах ҫырма сӗнесшӗн. Камӑн интереслӗрех, пукани асамлӑрах пулӗ?

## МӖНШӖН ШУРӐ УЛА ҪУРҪӖРТЕ ПУРӐНАТЬ?

Ку ӗҫ ӗлӗк-авалах, ҫӗр ҫинче пурнӑҫ пуҫланса кайнӑ чухнех пулса иртнӗ тет.

Ҫӗр-анне хӑй патне мӗн пур чӗр чунпа вӗҫен кайӑка чӗнтерчӗ тет: кашнинех малашне пурӑнма вырӑн валеҫсе парасшӑн.

Чӗр чунсемпе паллашма ҫӑлтӑрсене, уйӑхпа хӗвеле те чӗнчӗ тет.

Хӗвел пуринчен маларах ҫитрӗ тет. Илемлӗ сарапдан-па, чечеклӗ кӑшӑлпа, ярӑмлӑ шӑрҫапа. Хӑй пуринчен маларах ҫитнӗрен хӗп-хӗпӗрчӗк тет. Йӑл та йӑл ҫиҫет тет, кулнӑҫемӗн ӑшӑнса пырать тет. Мӗн чухлӗ ытларах кулать, ҫавӑн чухлӗ ытларах ӑшӑтать тет.

Кӑштахран палӑртнӑ вырӑна чӗннӗ чӗр-чунсем пухӑна пуҫларӗҫ пӗрин хыҫҫӑн тепри, ниепле те час пухӑнаймаҫҫӗ тет.

Каҫ та пула пуҫларӗ, сулхӑнланма тытӑнчӗ, чӗннӗ хӑнасем ҫаплипех пурте пуҫтарӑнса ҫитеймеҫҫӗ. Хӗвел ҫывӑхӗнче ӑшӑраххине туйса килекенсем ун ҫывӑхнерех вырнаҫма тӑрӑшрӗҫ тет.

Тӗвепе тимӗр шапа, хӑйсем палӑртнӑ вырӑна час ҫитеймессе туйса, ирех ҫула тухнӑ мӗн. Ҫавӑнпа та малтисен ретӗнче пулчӗҫ, хӗвел ҫывӑхнерех вырнаҫрӗҫ. Кенгурупа страус та вӗсемпе тупӑшсах юнашар ларчӗҫ.

Упа-утаман нихӑҫан та васкаман, ку хутӗнче те пӑртак аяккарах вырнаҫрӗ, унпа туслӑ тилӗпе кашаман та упа ҫывӑхӗнче пулма шутларӗҫ, пакшапа пӑши те.

Шурӑ упа хӗвел унӑн кӗрӗкне ӗнтсе вараласран хӑрарӗ, аяккарах тарчӗ. Ҫурҫӗр тӑмани те ҫав сӑлтавпах айккинелле сикрӗ, пингвин ҫӑвӗ ирӗлесрен хӑрарӗ, лань арӑсланран хӑрарӗ, упӑтене слон хӑратрӗ...

Тинех пурте пуҫтарӑнчӗҫ тет. Ҫӗр патши пухӑннӑ хӑнасене пӑхса ҫаврӑнчӗ тет те ҫапла каласа хучӗ тет:

- Хаклӑ тӑванӑмӑрсем! Ҫак кунран пуҫласа ҫӗр ҫинче кашни ӳсен тӑранӑн хӑйӗн вырӑнӗ, хӑйӗн килӗ пулать. Эпӗ сире кашнинех яланлӑх пурӑнмалли вырӑн хамах валеҫсе парасшӑнччӗ, эсир вара хӑвӑрах йӗркеленсе ларнӑ иккен, хӑвӑра килӗшнӗ пек.

Ҫак вӑхӑтран пуҫласа ӑшша юрататакан чӗр чунсемпе кайӑксем кӑнтӑрта – хӗвел хытӑ хӗртнӗ ҫӗрте пурӑнма

пуçларĕç тет. Страус, тимĕр шапа, тĕве, колибри, кенгуру тата ыттисем хĕвел ăшшинче хăйсене питех те лайăх туяççĕ тет.

Шурă упа, çурçĕр тăмани, пингвин тата ытти чĕр чунпа тискер кайăк çурçĕрте кун кунлаççĕ.

Пирĕн тăрăхра, хăвăрах пĕлетĕр, упа кунлать, тилĕ юртать, мулкач тилĕрен тарать.

Кашни хăй юратнă вырăнĕнче пурăнать.

## МУЛКАЧ КУРĂК ÇИМЕ ВĔРЕНЧĔ

Таçхан авал мулкач хальхи пек курăкпа мар, ашпăшпа апатланнă тет, кунĕн-çĕрĕн шăшисем сыхланă, кайăк-кĕшĕке, хур-кăвакала хăваланă. Пурăна киле шăшисем сайралансах çитнĕ, ватăларахпа кайăк-кĕшĕк тытма та йывăрланнă. Çаран çинче пĕртенпĕр шăши тăрса юлать, вăл та пулин вăрмана кĕрсе тарать. Мулкач, шăшие хăвалаканскер, вăрманах çитсе кĕрет (ку таранччен мулкачсен килĕ уйрах пулнă, вăрмана кĕрсе курман). Хăрахăрах вăрмана кĕрет хайхискер. Пăх та кур, шăши пĕр пĕчĕк йывăç тăррине улăхнă. Çӳлтен мулкач çине кулса пăхса ларать: «Тытаятăн-и мана, тытаймастăн-и? Улăхаятăн-и, улăхаймастăн-и?» Апла та капла та хăпарасшăн тапаçланать куян тус, йывăç çине улăхаймасть. Йывăçа кăшласа ӳкерме шутларĕ. Пĕрре çыртса пăхрĕ, тепре кăчăртаттарчĕ, хайхискерне килĕштерсех пăрахрĕ.

- Еплерех тутлă иккен йывăç туратти, мĕнле сĕтеклĕ. Кăшланăçемĕн куянăн хырăмĕ тăрансах ларчĕ, шăши çинчен пачах манчĕ. Шăшийĕ, мелле самантпа усă курса, айккинелле пăрăнса çухалчĕ.

Шăпах çавăнтанпа килĕштереççĕ те куянсем йывăç курăка. Пурăнасса та халĕ ытларах вăрманта пурăнаççĕ.

## ЙЫВĂÇА СЫВАТРĂМĂР

Çуркуннехи ăшă кун вăрмана кайрăмăр. Чечексем ешереççĕ, лĕпĕшсем пĕр-пĕринпе тытмалла выляççĕ, кайăксем концерт лартаççĕ, вăрăм тунасем нăйлаççĕ. Йывăçсем хитре тумланнă, çулçийĕсем çилпе калаçаççĕ, концертри юрăсем килĕшсен, пĕр-пĕринпе ăмăртсах алă çупаççĕ. Килĕшмен юрă çук пулас, алă çупни татăлмасть, кайăксем те пĕри теприпчен пултарулларах, алă çупма çеç ĕлкĕр.

Çул пĕчĕк çырма урлă каçать, çырма хĕрринче пĕр йывăç ларать. Пĕчĕкскер, пачах курăнмасть. Çырма урлă каçма пуçларăмăр, йывăç калаçа пуçларĕ.

- Сывă-и туссем! Ăçталла çул тытатăр?
- Вăрмана.
- Мĕн тума?
- Выляма-кулма. Вучахра çĕр улми пĕçерсе çиме, техĕмлĕ чей ĕçме.
- Эсир васкатăр пулĕ-ха, анчах та мана пулăшаймăр-ши?
- Мĕн пулчĕ? Мĕнле пулăшу кирлĕ?
- Мана куллен кăрентереççĕ?
- Кам хăйрĕ сире кăрентерме?
- Манăн тымарсем айне Шăшихурт илленчĕ, хăйне валли йăва çавăрчĕ. Кашни кун тымара вартать, кăшлать, чĕпĕтет, суранлать, вăй илме памасть. Шăшие хăтерсе ярăймăр-ши? Ку çеç те мар. Çулçăсене хурт ерчĕ, туратăмсене ашкăнчăк йытă хуçса пĕтерчĕ. Ниепле те вăй илейместĕп, çитĕнейместĕп.

Шухăша кайрăмăр. Мĕнле пулăшмалла-ши? Шăшихурта çĕнтерекен ăçта пурăнать-ши?

- Эп пĕлетĕп кам пулăшма пултарнине!
- Кам пулăшма пултарать? – хупăрласа илтĕмĕр Çеруша.

- Пирĕн кушак! Вăл, маттурскер, кашни кун икшер-виçшер шăши тытса алкум умне килсе пăрахать. Паян та ирех сунара тухрĕ.

- Пирĕн кушак та маттур. Вăл кашни кунах шăши тытать.

- Пирĕн сирĕнтен маттуртарах.

- Ачасем, тупăшар мар. Виççĕшне те чĕнсе илĕпĕр. Хăшĕ маттурри ĕçре палăрĕ. Кам Шăшихурта çĕнтерет, çав чи маттурри пулать.

Çеруш шăхличĕ туртса кăларчĕ.

- Шă-ши-и-и! - çухăрать шăхлич. Ун сассине илтсен виçĕ кушак çырма хĕррине çитсе те тăчĕ: Çерушсен Мăркки, Вовăсен Ваçки тата Володьăсен Паçукĕ.

Кушаксем пĕр-пĕринпе тупăшсах йывăç йĕри-тавра кускалама тытăнчĕç, тем самантра куç умĕнчен çухалчĕç. Шеллесех кайрăмăр, кашуксăр мĕнле пурăнас? Ĕçчен кушак ăçтан тупас?

- Айтăр, кушаксене шырама каяр!

- Каяр! Анчах ăçта? Ăçта çухалчĕç вĕсем?

- Ан кулянăр, - сасă пачĕ пĕчĕк йывăç, - вĕсем Шăшихурта шыраççĕ пулас.

- Хам-хам-хам, ăçта кушак сасси? – чупса тухрĕ ашкăнчăк йытă. Ун-кун пăхкаларĕ, йĕр тăрăх йывăç айне чăмрĕ.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, йывăç айĕнчен шăши хўрийĕ, унтан урисем, кĕлетки, чи юлашкинчен пуçĕ тухса выртрĕç. Шăши мар, тигр тейĕн – акă мĕншĕн вăл йывăçа çитĕнме паман, çăткăн хырăма тăрантарма çăмăлах пулман Шăшихурта.

Çак кунран пуçласа ашкăнчăк йытă йывăça хуçса кансĕрлеме пăрахрĕ тет. Кушаксене хăваласа çĕтсе кайрĕ, çĕр çине тухма çул тупаймарĕ.

Йывăç хурланнине концерт лартакан кайăксем илтрĕç, вăхăтлăха юрлама чарăнчĕç, хуртсене хўтĕрсе ячĕç.

- Тавтапуç, маттурсем, - хĕп-хĕпĕрчĕк йывăç.

Куç умĕнчех яштакланнăскер, пире ырă çул сунчĕ, хăй патне хăнана чĕнчĕ.

Хăш кушакки маттуртараххине пĕлесси пулмарĕ.

## КАШНИ ПУЛĂМĂН ХĂЙĔН ВĂХĂЧĔ

Пурăннă, тет, пĕр ачаш арçын ача.

Яланах амăшне йăлăнтарма юратнă, тет. Çулла çитсен, «Хĕлле хăçан çитет?», Хĕлле: «Çулла хăçан килет?».

Çутçанталăкăн кирек мĕнле вăхăчĕ те виç кунтанах йăлăхтарать, тет ăна.

Кăшкăрса-йăлăнтарса уйрăмах Çуллапие тарăхтарсах çитерчĕ, тет.

-Манăн пур çĕре те йĕркипе çитмелле, пурин патĕнче те хăнара пулса савăнтармалла, черетсĕр сан пата килме манăн ирĕк çук, пĕр сана çеç хĕпĕртеттерме эсĕ патша мар, - ăнлантарать кăна Çуллапи.

Çук, ача хăйĕннех перет, кашни уя тухса Çуллапине килме чĕнсе кăшкăрать, çиллентерсех çитерчĕ, тет Çуллапине. Кăна вĕрентсе илме шутларĕ, тет, Çуллапи.

Хĕвел анса ларчĕ, ача канлĕ ыйха путрĕ. Çуллапи унăн вырăнĕ патне çитсе тăчĕ, ачана çывăрма чăрмантарать, пĕçертет, чĕпĕтет, тар кăларать. Çĕр каçипех нушаланчĕ лешĕ, канлĕ çывăрасси пулмарĕ. Кунĕпех ĕнтĕркесе çӳрерĕ, кунĕпех пуçĕ кашларĕ.

- Кирлĕ мар мана Çуллапи, хĕл пултăр, - тарăхса мăкăртатрĕ, тет, хайхи.

Тепĕр каçхине ача кравачĕ патне Хĕл Мучи çитсе тăчĕ. Темĕн чухлĕ утиял айĕнче те ачан ăшăнасси пулмарĕ, паллах, çывăрасси те.

Ачан амăшĕ, ывăлне ертсе, юмăçа çитсе килме шутларĕ, тет.

- Эсĕ çутçанталăк пулăмĕсене çиллентернĕ. Кашни пулăмăн хăйĕн вăхăчĕ. Çулла хыççăн кĕркунне, унтан хĕлле, унтан çуркунне, кайран каллех çулла çитет. Эсĕ вара вĕсене кӳрентернĕ. Çутçанталăкăн йĕркисене пăсма юрамасть, - ăнлантарчĕ юмăç ачана.

- Мĕн тумалла?

- Çутçанталăк хуçи патне çитсе унран каçару ыйтмалла, тинех канлĕ ыйхă тупăн.

Çапла турĕç те кусем. Çутçанталăк хуçине шыраса тупса, унран каçару ыйтрĕç, ача хăй йăнăшне ăнланни çинчен пĕлтерчĕ.

Тинех каçсерен чăрмантарма пăрахрĕç, тет, шăрăх Çуллапипе хаяр Хĕл Мучи. Тинех канлĕн çывăрма пуçларĕ, тет, хайхи ача. Нăйкăшма та пăрахрĕ, тет.

## КАМПУРПА ШАРИК

Мăрккапа Кампур питĕ туслă пурăннă. Мăркка тирпейлĕхшĕн яваплă пулнă, апат-çимĕç пĕçернĕ, кăмака умĕнче кăштăртатнă. Кампур ытларах кил таврашĕнче ĕçленĕ, вутшанкă хатĕрленĕ, анкартине тытса тăнă.

Çуркунне çитсен, мăрккапа Кампур кайăксем валли йăвасем тума шутлаççĕ. Калаçнă – тунă. Кампур шăнкăрч вĕлли хатĕрлет, ăна тĕрлĕ ерешсемпе илемлетет.

«Мăркка, эсĕ йывăç çине улăхма пултаратăн, хăпарса çак-ха çак вĕллене пӳрт умĕнче ӳсекен хурăн çине», - тет вăл Мăрккана.

Мăркка, килĕшсе, хурăн çине улăхса каять. Йăпăряпăр вăшт кăна хурăн тăррине çитет, анчах та васканипе хăй те асăрхаймасть, шăнкăрч вĕллине чĕрнисем хушшинчен кăларса ӳкерет. Кампур шăпах çак вăхăтра хурăн айĕнче пăхса тăрать-мĕн.

Шăнкăрч вĕлли, хурăн çинчен ӳксе, унăн пуçне самаях ыраттарать. Икĕ эрне вырăнпах выртма тивет мĕскĕн Кампурăн. Пĕррехинче çаксем вăрмана çырлана каяççĕ.

Кампур Мăрккана хăйĕнчен уйрăлма хушмасть, анчах та Мăркка, шăшисене хăвалаcа, лĕпĕшсем хыççăн чупса, часах çĕтсе юлать. Эрне хушши вăрманта çĕтсе çӳренĕ хыççăн аран-аран тăван килне çитет. Килне çитсе кĕрет, пăхать – пӳрт тулли таса мар чашăк-тирĕк, урайне те эрнипех çуман, Кампур хăй вырăнне те пуçтарман иккен. Тарăхсах каять Мăркка, Кампур çине çилленмеллипех çиллленет.

Çакăнтан пуçланса каять те Кампурпа Мăркка хушшинчи хирĕçӳ.

Шăпах çавăнтанпа килĕштермеççĕ те йытăсемпе кушаксем.

## УРИНЕ-КĂТКĂ

Урине яланах ĕмĕтленме юратнă.

- Анне, манăн кăткăсем патĕнче хăнара пулса курас килет. Мĕнлерех-ши вĕсен пурнăçĕ? Тĕмĕ ăшĕнче питех те кăсăклă пулĕ, - тенĕ амăшне Урине. – Мĕнле кураççĕ-ши, мĕнле тупаççĕ-ши çула вĕсем?

Унччен те пулмарĕ: «Эпĕ сана пулăшатăп», - сасă илтĕнсе кайрĕ. Урине умĕнче асамçă тăрать иккен. Хĕр ачана вăл кĕмĕл мерчен тесе пĕчĕк çаврашка тыттарать. Пуç пӳрнепе ун çине пуссассăнах эсĕ кăткăсем патĕнче хăнара пулатăн тет.

Урине савăнсах каять, нумай та шутласа тăмасть, мерчен çине пӳрнипе пусать. Тӳрех кăткăсен патшалăхне çитсе тăрать.

Кăткăсем кĕшĕлтетеççĕ кăна. Пурте ĕçлеççĕ: пĕри курăк туртать, тепри ăна пулăшать. Виççĕмĕшĕ хыр йĕппине сĕтĕрет. Пĕр Урине кăна нимĕн те тумасть. Çапла кун хыççăн кун иртет.

- Манăн кăткăсен патши пулас килет, - тет вăл хăйĕнчен мĕншĕн ĕçлеместĕн тесе ыйтсан. – Патша вăл ĕçлемесĕрех пурăнать.

Çак сăмахсене илтсен кăткăсен чăн патши çилленсех каять.

- Тĕрĕс мар калатăн эсĕ, Урине, - тет. – Патшан пуринчен те нумай ĕçлемелле, пуриншĕн те тăрăшмалла. Кам кăна кўрентермест пулĕ пире, кăткăсене? Тин çеç пўрт купаласа пĕтеретпĕр – урана пусса е тапса ăна аркатса та тăкаççĕ. Йытă та чавса тăкать, кайăк та чавать – каллех çурта çĕнетмелле. Патшан мĕнпур ĕçе йĕркелесе тăмалла.

- Манăн уйрăммăн пурăнас килет, - каллех кутăнланать Урине.

Урине-кăткăна уйрăм пўрт туса параççĕ. Анчах пĕччен пурнăç çăмăл мар. Кичем тата. Çапла Урине каллех кăткăсен йышне таврăнать.

Нумай пурăнать-и, сахал-и, Уринене çĕр айĕнче йăлăхтарса çитерет. Киле таврăнас, анчах епле? Киле епле таврăнассине асамçăран (кăткăсен патшалăхĕнче вăл та çук!) ыйтма манса кайнă вăл.

Хĕр ача-кăткă йĕрсе ларнине шăрчăк курах каять те ăна пулăшма шутлать.

- Кахалланса ларнипе нимĕн те пулмасть, - ăс парать шăрчăк тус. – Санăн ытларах ĕçлес пулать. Вара эсă киле чиперех таврăнăн.

- Мĕн тăвас тетĕн, шăрчăк сăмахне итлемех тивет. Кăткăсемпе пĕрле вăй хучĕ тет Урине, кунне-çĕрне пĕлмесĕр. Ĕçлерĕ-ĕçлерĕ тет те кăткă-хĕр ачаран каллех чиперкке хĕр ача пулса тăчĕ тет.

## ÇĂМЛАМАС

Пĕр çемьере икĕ хĕр çитĕннĕ. Пĕрне Марине, теприне Урине тесе чĕннĕ. Хĕрачасем пĕр-пĕринпе килĕштереймен.

Выляс-тăвас пулсан та яланах пĕр япала çинче вăрçса-хирĕçсе кайнă.

- Ку пуканене атте мана илсе панă, ан тĕкĕн ман пуканене, - тет Марине.
- Мĕншĕн ман упана тумлантаратăн? Хур ăна хăй вырăнне! – кӳренет Урине.

Хĕрачасем нихăçан та пĕр чĕлхе тупаймаççĕ.

Пĕррехинче ашшĕ вĕсене пĕр çăмламас кушак çури илсе килсе пачĕ. Хура перчеткеллĕскерне хĕрачасем пĕрре курсах юратса пăрахрĕç.

Марине кушак çурине Мăр-Мăр, Урине ăна Пупсик тесе чĕнме тытăнчĕç. Кушак çури Мăр-Мăр тесен Марине патне чупса пырать, Пупсикпа Урине умне куçать. Марине: «Атте мана Мăр-Мăр парнелерĕ» - тесе савăнать. Урине: «Манăн Пупсик манах юратать», - тесе йăл кулать.

Пĕррехинче кушак çури уçăлма тухрĕ. Кунта пĕчĕк çеç йытă çури чупса çӳрет. Пĕр-пĕрне сывлăх суннă хыççăн хайхисем пĕр-пĕринпе паллашма шутларĕç.

- Эсĕ кам?
- Йытă çури. Мана Кампур тесе чĕнеççĕ. Эсă мĕн ятлă?
- Хăшпĕр чухне Мăр-Мăр, тепĕр чухне Пупсик, - тет Мăр-Мăр – Пупсик.
- Мĕнле ун пек? – тĕлĕнет Кампур. Ун пек пулма пултараймасть. Кирек камăн та пĕр ят пулмалла.

Кушак çури тĕлĕнсех кайрĕ. Кĕçех вĕсем тавра килхушшинчи ытти чĕрчунсем пухăнчĕç.

- Эпĕ Чип-Чип ятлă, - паллаштарать хăйне сарă чăмăркка чĕпĕ.
- Эпĕ Шип-Шип, - тет кăвакал чĕппи.
- Маклашка – тет пăру.
- Улашка, - тет путек. Эсă мĕн ятлă?
- Эпă вара те Мăр-Мăр, те Пупсик, - пуçне усать кушак çури. Чĕрчунсем кушак çурине йăпатса лăплантарасшăн, нихăшĕ те лăплантараймасть.

Кушак çури пуçне усса килне таврăнать.

- Анне, мĕн пулнă Măр-Măра? Мĕншĕн вăл манпа вылямасть, - чĕнсен те ман пата пымасть, - тĕлĕнет Марине ирхине.

- Анне Пупсике кам кӳрентернĕ? – тутисем чĕтреççĕ Уринен.

Амăшĕ кушак çури «чирĕн» сăлтавне ăнлантарса пачĕ, тет.

- Кашни япалан хăйĕн вырăнĕ. Кашни чĕрчунăн пĕр ят çеç пулмалла, этемĕн те. Хушма ятпа чĕнни сынна кӳрентерет, çавăнпа та яланах ятпа чĕнмелле. Çавăн чухне çеç тĕнчере йĕркелĕх пулать.

Хĕрачасем пĕр-пĕринпе пĕр чĕлхе тупрĕç, тет. Кушак çурине Çăмламас тесе чĕнме пуçларĕç, тет. Кушак çури тинех йăл кула пуçларĕ. Уринепе Марине пĕр-пĕрне кӳрентерме те пăрахрĕç.

## ВĂРМАН ПАТШИ ПАТĔНЧЕ ХĂНАРА

Усал чир-чĕр çыпçăнчĕ. Куçран-пуçран вут-хĕм тухать, пĕр чарăнми куççуль юхать, мĕн пур кĕлеткене пăталать, уйрăмах пыра канăç памасть, тарăннăн сывлаймастăн, пăштик-пăштик сывлакаласа кун-кунлатăн. Чĕри те тăпăрт- тăпăрт-тăпарт- тăпарт тесе кунĕпех асапланать. Пĕр чарăнми –сĕрттерет, хаяр анчăк çури пыра кĕрсе ларчĕ те кунĕпех вĕрсе ларать. Каç пуласран хăракан пултăм. Кăнтăрла çапах çӳрекелеме пулать-ха, сывăрма выртсан - сывăраймастăн, пуçа минтер çине хуратăн çеç - сывлăш пĕтсе ларать, сывлăш çитмест, сывлăш çитменнипе тăрса ларма тивет. Виçĕ каç хушши ларса çывăрса пурăнтăм. Пĕр чĕптĕм апат çимен, хăр шывпа çеç, юлашкинчен алă çĕклеме те вăй юлмарĕ, куç уçма та вăй кирлĕ. Вилĕм каçсерен киле пуçларĕ, мана хăйпе илсе каясшăн калаçать, ирĕклĕрех те ирĕклĕрех, хăюлланнăçемĕн хăюлланса пырать. Эпĕ вара кашни сăмаххине шутласа калаçакан пултăм.

- Анне, - тет мана пĕчĕк хĕрĕм ир çинче.

- Айта-ха вăрман патши патне кайса пулăшу ыйтăпăр. Эпĕ хăвелтен пулăшу ыйтрăм, хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ, уйăха тархасларăм – ним те шарламасть, çăлтăрсене тилмĕртĕм – вĕсем те чĕнмерĕç. Тен, вăрман патши пулăшĕ? Вăрманти туссем пире яланах тĕрлĕрен çырлапа, кăмпапа хăналатчĕç, нихăçан та пушă алăпа кăларса яман.

Вăраххăн тăрса тумлантăм, алла туя илсе пĕчĕк хĕрĕмпе çула тухрăмăр.

Нумай пулать-и, сахал-и – пирĕн ума икĕ куян сикрĕç тухрĕç. Пире хăйсем çине лартрĕç те вĕçтерчĕç тĕмсем хушшинелле. Эх пыраççĕ чавтарса, эх сикеççĕ шалалла, кайсан-кайсан чарăнчĕç, пире антарчĕç - хăйсем çухалчĕç. Икĕ тилĕ çитсе тăчĕç. Кусем те пире кĕтсе тăнă-мĕн, урапапах килнĕ. Иксĕмĕре те урапа çине лартрĕç, урапана кӳленчĕç, урхамахла шалалла вĕçтерчĕç.

Нумай кайрăмăр-и, сахал-и пĕр пысăк уçланкăна пырса чарăнтăмăр. Уçланкă варринче темиçе хăлаç сарлакăш пысăк йывăç ларать. Хурăн-çăка-чăрăш-вĕрене-юман – тата ытти тĕрлĕ йывăçсен тымарĕсемпе çĕртен çирĕппĕн тытăнса тăрать.

- Сывлăх сунатăп, хаклă хăнасем!

- Каласа парăр мĕн ертсе çитерчĕ сире ман пата? – ыйтать пиртен çак йывăç. Малтанах ним чĕнме аптăрарăмăр. Пирĕн умра йывăç мар, вăрман патши тăрать иккен.

Тумтирĕ тĕрлĕ йывăçсенчен мĕнле кăна йывăç-курăк, мĕн тĕрлĕ кăмпа-çырла, мĕн тĕрлĕ ӳсентăран çук-ши кунта! Çакă çутă тĕнчере еплерех курăк-ӳсентăран – пурте вăрман патши çипусĕ çинче.

- Эсĕ манăн аннене пулăшаймăн-ши? Анне йывăр чирлерĕ, ниепле те уçăлаймасть, - хăйса ыйтрĕ пĕчĕк хĕрĕм.

- Хаваспах пулăшатăп, анчах та уншăн сирĕн те мана 3 ĕç туса парас пулать, - терĕ те вăрман патши шăпланчĕ, урăх темĕн чухлĕ калаçсан та хирĕç пĕр сăмах та шарламарĕ.

Тăратпăр кулянса, нимĕн тума аптраса, - чим-чим-чим, - чĕвĕлтетет хитре кайăк пирĕн умра, - чим-чим!

Кайăк вăрман патши çине ларчĕ, пире çӳлелле улăхмаллине систерчĕ.

Вăрман патши патне çывхартăмăр çеç, хамăр та сисмерĕмĕр, çӳлелле улăхса та лартăмăр.

Пирĕн умра темĕнле хăвăл. Çак хăвăлта çап çутă йăлтăркка пысăк чул выртать, вут-хĕм сирпĕтет.

- Çак пысăк чула çĕр çине илсе пăрах! – илтĕнчĕ сасă. Вăл мана пĕçертет, канлĕ ыйхă памасть.

- Мĕн тăвас? Вăрман патшине епле пулăшас?

- Халех, халех, эпир халех! Хамăр та сисмерĕмĕр, ман алăри туяна такам туртса илчĕ, хайхи чул таврашĕнче темĕнле чĕрчунсем кускалама пуçларĕç. Патака шăрт-шарт тутарчĕç, чула туя татăккисемпе тĕрткелерĕç, лешĕ хĕм сирпĕтет, вут-çулăм тухать, тĕттĕмленет, çапах та хайхискере çĕнтерчĕç-çĕнтерчех, шăтăкран çĕрелле илсе ывăтма пултарчĕç.

- Тавтапуç, туссем, - терĕм çеç, чĕрчунсем куç умĕнчен çухалчĕç те.

- Тавтапуç сана, хĕрĕм. – Вăрман патши каллех шăпланчĕ.

Ку таранччен пит-куçран вут-çулăм сирпĕннĕ пулсан, çак самантран манăн та пĕçертни таçта кайса çухалчĕ.

Каллех тăвалла çул тытатпăр. Пирĕн çул чăтлăх витĕр. Темле шурлăха çитсе кĕтĕмĕр. Куç-пуç курăнми шăна-пăван явăнать.

- Çак шăна-пăвана пĕтер!

Мĕнле пĕтермелле? Камран пулăшу ыйтмалла?

4-37367
...Чувашской
Республики

- Чим-чим-чим! Эпă халех хамăн туссене чĕнсе килетĕп. - Çапла каласа пĕчĕк чĕвĕлтĕк çухалчĕ.

Кĕçех шурлăх кайăк сассипе тулчĕ.

Чăр-чар, пăр-пар, вĕлт-вĕлт – пĕр чарайми ĕçлеççĕ ĕçченсем, самантра пĕр нăйăлти юлмиччен тытса пĕтерчĕç, мĕнле вĕççе килнĕ, çавăн пекех хăвăрт кайса çухалчĕç.

- Çĕре çити пуç таятăп, тусăмсем.

- Тавтапуç сана, хĕрĕм. Вĕсем мана куç хупма памастчĕç, халĕ канлех çывăрма пуçлăп.

Хамăн та куççуль юхма пăрахрĕ, сăмса та лăпланчĕ.

Малаллах шăвăнатпăр. Умра хитре çарансем, илемлĕ чечексем. Чим-ха, ку тата мĕскер? Самаях пысăк уçланкă хуралсах ларнă? Пĕр уçланкă хупах, пĕр уçланкă куршанак.

- Çак уçланкăна тирпейле!

Пĕчĕк хĕрĕмпе иксĕмĕр те кулянсах ӳкрĕмĕр. Мĕн тăвас? Камран пулăшу ыйтас?

Ларатпăр,сасăпах йĕрсе куççуль юхтарса. Эпир йĕнине çил илтрĕ пулас.

- Эпĕ халех хам тусăмсемпе килетĕп!

Пĕр ушкăн çавра çил çиçтерсе çитрĕ, уçланкă йĕритавра темиçе хутчен çаврăнчĕ, мĕн пур усалтĕселе, пиçенхупаха, куршанкисене тымăрĕ-мĕнĕпех кăкларĕ, таçта аяккалла, çичĕ тинĕс леш еннех кайса сапаларĕ.

- Тавтапуç, сана хĕрĕм. Кашни кун чĕпĕтетчĕç - кăтăклатчĕç, чăрмантаратчĕç. Халĕ тинех канлĕнех пурăнма пуçлатăп. Ну, ларăр, хăналанăр, тутлă апат-çимĕç астивĕр.

Манăн хамăн та çак самантран пуçласа йĕплекенчиккелекен çухалчĕ.

Вăрман патши патĕнче чун тăраниччен тĕрлĕрен пахча çимĕç çирĕмĕр, уçă сывлăшпа сывларăмăр.

Вăл пире киле кайма çилçунатлă урхамах кӳлсе пачĕ, ямшăкĕ – пĕчĕк çеç пакша пире пӳрт умнех леçсе хăварчĕ.

Киле çитсе кĕтĕмĕр, манăн пуç та ыратмасть, вĕрилентермест те, сывлăш та чăрмантармасть. Çапларах

вăрман патши пулăшнипе эпĕ сывалтăм. Урăх чирлес марччĕ.

## ЙĔРМĔШ КУПĂС

Пурăннă те пĕр карчăкпа старик. Вĕсен пĕртен-пĕр ывăлĕ, сăнĕ-пичĕпе хитрескер, питех те ачаш ача пулнă тет. Карчăкпа старик пĕртен-пĕр ывăлĕшĕн тем тума та хатĕр пулнă, ачашласа çеç çитĕнтернĕ, нимĕнле ĕç те хушман. Ачашскер ачашланнăçемĕн ачашлансах пынă, калаçăвĕ те улшăннă, найкăшса çеç калаçакан пулнă. Кирек ăçта кайсан та куççуль кăларнă, йĕрмĕшнĕ.

Пĕррехинче ашшĕ-амăшĕ юратнă пепкине хут купăс туянса параççĕ. Эх, хĕпĕртет, савăнмаллипех савăнса каять арçын ача, вăхăтлăха йĕрмĕшме те пăрахать, купăсĕпе мухтанма хăйĕн тус-тантăшĕсене хăнана чĕнет, вĕсене купăс каласа ташлаттарса-юрлаттарма ĕмĕтленет. Чĕннĕ хăнасем пуçтарăнсан ача аллине хут купăсне тытать, купăс калама пуçлать.

- А-а-а, - йĕме тытăнать купăс. Тепĕр майлă туртать, каллех а-а-а! тени çеç янăрать. Апла та, капла та çавăрать купăса, юрă улшăнмасть, купăс йĕме пăрахмасть. Купăсăн йĕрмĕш сассине илтсен тантăшĕсем пурте килĕсене тарса çухалаççĕ.

Ача купăса йăтса урама тухать, урамри халăха купăс каласа савăнтарасшăн, çук, савăнтараймасть, купăс йĕме пăрахмасть, урамри халăх та тарса çухалать. Клуба çул тытать, кунти халăха хăратать, шкула çитет – ачасене кӳрентерет. Мĕн тумалла? Мĕншĕн купăс кĕвĕ каламасть? Мĕншĕн купăс янрамасть? Ялти ватăран ыйтаççĕ, тупсăмне тупаймаççĕ, юмăç карчăкĕ патне çул тытаççĕ. Карчăк ачана купăс мĕншĕн юрламаннине ăнлантарса пачĕ тет.

- Эсĕ ăна хăвăн кăмăлупа кӳрентернĕ. Санăн çак кунран пуçласа йĕрмĕшме чарăнмалла, пули-пулмишĕн куççуль кăларма пăрахмалла, купăс сасси те улшăнĕ.

- Арçын ача ашшĕ-амăшне урăх нăйкăшмăп тесе сăмах пачĕ тет. Хăй сăмахне тытрĕ тет. Çак кунран пуçласа пĕр куççуль те кăлармарĕ тет. Хăра-хăрах алла купăсне тытсан йĕри-тавра асамлă сасă янăраса кайрĕ тет. Шăнкăрав сассиллĕ купăс часах хăйĕн тавра тем чухлĕ халăх пуçтарчĕ тет, тавралăх юрă-ташă кĕввипе тулчĕ тет.

Нумаях та вăхăт иртмен, арçын ачаран паллă купăсçă пулса тăнă тет.

## ЫТЛАШШИ АН ХАПСĂН

Пĕр карчăкпа старик пурăннă тет. Старикки яланах сунара тухса çÿренĕ, арăмне хур-кăвакал тытса килсе савăнтарнă. Пĕррехинче яланхи пекех сунара каять, кунĕпе çÿресе те ним те тытаймасть. Каç енне шыв хĕрринче хур кайăк курать, пеме пăшалне çĕклет:

- Ан пер, ан тат ман пурнăçа? – этем чĕлхипе калаçма пуçлать хур кайăк. – Эпĕ санăн виçĕ ĕмĕтне пурнăçлама шантаратăп.

Пăшалĕ лăстăрах усăнать старикĕн. «Мана ни те кирлĕ мар», - тесе килнелле утать.

- Мĕнле нимĕн те кирлĕ мар! Паллах, сана ним те кирлĕ мар, ваçех мана çеç кирлĕ! Ыйтса илесчĕ-тĕк тÿшек, килти тÿшек таткаланса пĕтнĕ! – вăрçма пуçларĕ карчăк старике.

Старикĕн хур кайăк патне таврăнма тиврĕ.

- Мĕн кирлĕ сана?

- Хама нимĕн те кирлĕ мар, карчăка тĕк тÿшек кирлĕ, - тет.

- Юрĕ, уттарах килнелле, эс мĕн ыйтни пурнăçланĕ тет.

Çитет старик килне. Вырăн çинче тем çÿллĕш мамăк тÿшек сарăлса выртать.

Каллех карчăкăн çилли лăпланмасть:

- Кĕçех хĕл çитет. Ыйтса илесчĕ ăшă тумтир!

Каллех старик хур кайӑк патне ҫул тытать.

- Мана карчӑк вӑрҫать, хӗле валли ӑшӑ тумтир ыйтса илме хушать.

- Сан ыйтӑвна тивӗҫтеретӗп.

Старик килне ҫитнӗ ҫӗре киле ӑшӑ ҫипуҫ ҫитсе те выртнӑ, ӑна хирӗҫ карчӑкки тем тӗрлӗ кӗпе тӑхӑнса саркаланса ҫеҫ ларать тет.

- Ку хитре ҫипуҫа ҫын ҫинче тӑхӑнмалла, манӑн пӗртте килте ларас килмест, ҫынсен карчӑккисем пек юрӑташӑ уявӗсене ташлама, савӑнма тухас килет. Ӑна валли тӑрантас кирлӗ. Лава тытса пыраканни хур кайӑк хӑй пултӑр! Халех ҫитсе пӗлтер хур кайӑка! Халех! Ҫак самантрах!

Старик кӑштӑртатса хур кайӑк пурӑнака юхан шыв патне ҫитнӗ ҫӗре хур кайӑк хурланса ларать-мӗн.

- Мӗн кирлӗ сана, старик?!

- Мана хама нимӗн те кирлӗ мар. Ман карчӑк бала каясшӑн, унта ҫитме тӑрантас кирлӗ тет. Лавҫи пулма сана хушасшӑн.

- Юрӗ, уттарах килне.

Старик килнелле васарӗ. Киле ҫитрӗ те пӑхать: тӳшек те ҫухалнӑ, ӑшӑ тумтир те ҫук, карчӑкки те курӑнмасть. Виҫ кун шыранӑ хыҫҫӑн ҫеҫ карчӑкки тупӑнчӗ тет. Ӑҫта ҫӳренӗ, мӗн тунӑ, нимӗн те каласа параймарӗ тет. Ӑҫта пулнине хӑй те пӗлмест пулсан мӗнле каласа парӗ-ха вӑл?

## ТЫР – ПУЛЛӐ ТА ПУЛЧӖ, УКҪАЛЛӐ ТА

Пурӑннӑ, тет, пӗр чухӑн хресчен. Ачи-пӑчи йышлӑ пулнӑран выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнма тивнӗ тет. Пӗр ирхине ҫимелли йӑлтах пӗтсе ҫитрӗ тет. Хресченӗн пуян патне кайма тиврӗ тет. Пуян ҫӑкӑрне парассине пачӗ тет, анчах та уншӑн ӗҫлесе татма хушрӗ тет.

Шӑпах тырӑ акмалли вӑхӑт. Ҫырма-ҫатра хӗрринчи чуллӑ анапа пуян нихӑҫан та усӑ курман, аксан-акмасан та

унта ҫапах нимĕн те ҫитĕнес ҫук. Шăпах ҫав анана акма хушать те вăл хресчене. Хресчен килĕшет, анчах та анана пăхса ҫаврăннă хыҫҫăн пуян патне таврăнать, кĕркунне туса илнĕ тыррăн ҫуррине ĕҫленĕшĕн тӳлев выранне хăйне пама ыйтать, тӳлев выранне.

- Унта ҫапах нимĕн те ӳсес ҫук, илтĕрех, - килĕшмех тивет пуянăн.

Йышлă ачи-пăчине ертсе хресчен ĕҫе пикенет. Кам пĕчĕк урапапа, кам витрепе чула ҫырмана тултараççĕ. Тар юхтарни сая каймасть, эрнерен уя тасатса ҫитереççĕ, сухаласа акса хăвараççĕ. Ҫăвĕпех пăхса тăраççĕ, ҫум курăкран тасатаççĕ, шăрăх ҫанталăкра ҫырмаран витрепе шыв туртма та тивет. Ана вăй илет, тырă пусси куҫа савăнтарать.

Ҫурла уйăхĕ ҫитеспе пуян хăй хуҫалăхне пăхса ҫаврăнма шут тытрĕ тет. Хресчене тара панă анана курсан куҫĕсем шарсах кайрĕҫ тет.

- Ҫуррине хресчене ĕҫленĕшĕн татăлмалла, кун чухлĕ пуянлăха ҫынна ма парас?

Пуян хресчене улталама шыт тытрĕ. Тырра пухса тирпейленĕ хыҫҫăн шăпах пĕр кĕлет тулса ларчĕ тет.

Хресчен тырă тиеме лавпах ҫитрĕ тет. Вăл ҫитнĕ ҫĕре пуян вилнĕ пек пулса тупăка кĕрсе выртнă тет. Хресчене хирĕҫ пуянăн арăмĕ – ӳлесе тухать тет:

- Вилсе кайрĕ вĕт, пире тăлăха хăварчĕ. Нимĕнле парăм пирки те вăл каламан, парăм пирки калаҫу пулма та пултараймасть. Вилнĕ ҫынран мĕн ыйтас?

Хресчен пӳрте кĕчĕ, пăхкаланă хыҫҫăн пуян хăйне улталасшăн пулнине сисрĕ.

- Мĕнех, эпĕ шăпах лашапа, чиркĕве кĕл тума илсе кайма пултаратăп.

Вилнĕ ҫынна кĕл тутармаллах, пуян арăмĕн килĕшмех тиврĕ.

Ҫул пысăк вăрман урлă-мĕн. Пĕр чăтлăхран вăрăхурахсем сиксе тухрĕҫ тет те лаша ҫулне пӳлчĕҫ тет.

- Тр-р-р, ăçталла çул тытатăн?
- Чиркĕве, вилнĕ çынна кĕл тутарма.

Вăрă-хурахсем хресченрен мул тавраш ыйтса илме май çуккине кура лашана çавăтса кайма шут тытрĕç.

- Тăхтăр-ха, тăхтăр! Эсир вилерен ирĕк ыйтрăр-и?
- Çук.
- Ыйтас пулать, вилерен мала сикме хушман.

Йĕрĕнкелесе виле патне çывхарчĕç тет, лешĕн хăранипе çӳçĕ вирелле тăчĕ. Пĕр хурахĕ вилерен йĕрĕнсе хайхин пичĕ çине чăрт сурса пуçне айккинелле пăрчĕ тет. Шартах сикрĕ те пуян сикрĕ-тăчĕ тет.

- Караул!

Йăлтах кĕтмен çĕртен пулнипе мĕн пур ушкăн айккинелле тапса сикрĕ, мĕн пур пурлăхне пăрахса хăварчĕ.

- Эсĕ тата ма хăрамастăн, - тĕлĕнет пуян.
- Эсă ултавçă пулнине паçăрах сисрĕм. Ну мĕнле, çур кĕлет тырруна паратăн-и, памастăн-и?
- Темле.
- Памасассăн халех пур вăрă-хураха каялла чĕнсе илетĕп, эсĕ улталани çинчен пĕлтеретĕп, - хăратать хресчен пуяна.

Пуянăн парăнмах тиврĕ.

Хресчен тыră-пулăллă та пулчĕ, укçаллă та, вăрă-хурахсенчен укçа нумай выртса юлчĕ-çке!

## ХĔРТСУРТА УЛТАЛАНИ

Пураннă, тет, пĕр карчăкпа старик. Вĕсен пĕр хĕр пулнă, тет. Ăна Урине тесе чĕннĕ. Кăн-кăвак куçлăскер, сап-сарă çӳçлĕскер, çаврака питлĕскер, вăл питĕ хитре пулнă, тет. Кунĕпех хăйĕн çепĕç чĕлхипе чĕвĕлтетсе çӳренĕ, карчăкпа старике савăнтарнă. Вĕсем хĕрачашăн чунне пама хатĕр, ăна мĕн ыйтнине веçех илсе тумлантараççĕ, анчах ĕçе пач та хăнăхтармаççĕ. Хĕрача кахал пулса çитĕнет.

Вĕсен ял ҫывăхĕнче пысăк вăрман пулнă, тет. Ҫак вăрманта тĕрлĕ чĕрчун, кайăк-кĕшĕк пурăннă. Кунтах вăрман хуралҫи – Хĕртсурт. Вăл кашни ир вăрман тăрăх чĕрчунсем мĕнле пурăннине тĕрĕслесе ҫӳрет, хирĕҫекенсене, вăрмана варалакансене ятлать, вырăна лартать.

Урине пĕррехинче пĕчченех вăрмана тухса каять те, ҫухалса каять. Утсан-утсан, Хĕртсурт ҫурчĕ патне ҫитсе тухать. Хĕртсурт вăл вăхăтра шăпах чĕрчунсем патне хăнана кайнă пулнă. Урине пӳрте кĕрет те, ҫывăрса каять.

Хĕртсурт киле таврăнсан, хĕрачана курать те, савăнсах каять: «Тинех мана пулăшакан тупăнчĕ», - тет. (Вăл Урине кахаллине пĕлмен). Кунсерен хĕртсурт вăрмана тухса каять. Каяс умĕн пӳрте питĕрсе хăварать.

Пĕр кун иртет, икĕ кун, Урине нимĕн те ĕҫлемест. Ҫиет те ҫывăрать, ҫиет те ҫывăрать. Хĕртсурт малтанлăха нимĕн те шарламасть, тет.

Пĕррехинче, вăл куҫҫульпе йĕрсе ларнине курсан, шăтăкран пĕр пĕчĕк шăши тухать. Хĕрачана ҫапла сĕнет: «Хĕртсурт ĕҫченсене анчах юрататать, эсĕ вăл киле таврăннă ҫĕре пӳрт-ҫурта тасатса тирпейле. Иккĕмĕшĕнчен, вăл тутлă ҫиме юрататать. Тĕрлĕ шӳт-кулăш итлеме те кăмăллать».

Урине тӳрех ĕҫе тытăнать (киле питех те каяс килетҫке!).

Милĕк илет те – пӳрт урайне шăлса тухать. Шăши, ĕҫе пăхсан, япăх тесе хак парать. Урине тепĕр кут шăлать – шăши каллех тиркет.

Хĕрача вĕри куҫҫульпе макăрма пуҫлать, вара шăпах ҫур витре куҫҫуль пухăнать. Ҫавăнпа ҫуса тухсан, урай тинех йăлтăр ҫуталса каять.

«Мĕн пĕҫерес?» Тахҫан, пĕрре Урине амăшĕпе хуран кукли пĕҫерсе курнăччĕ. Шăпах ҫакна хатĕрлеме шут тытрĕ те вăл.

Шăши çури ăна Хĕртсурт апат-çимĕçе ăçта усранине кăтартрĕ. Кăштак çăнăх, чăкăт юлашкисем пур-мĕн. Пĕр кайăк Уринене темиçе çăмарта килсе пачĕ. Сак айĕнчи хăма хушшипе ешĕл сухан шăтса тухни пур. Мулкач çури çу тупса килчĕ. Питех те тăрăшса, васкамасăр, хуран кукли пĕçерчĕ хĕрача. Чĕкеç чĕппи кукăле astivse, «Питĕ тутлă» тесе муктасан, савăнчĕ.

Каçхине, Хĕртсурт киле таврăнсан, тĕлĕнсех кайрĕ. Уринене мухта-мухта, кукăль çиме ларчĕ. Çав вăхăтра хĕрача хайне мĕнле тĕлĕнтерсе култарасси пирки шутлать.

Хĕртсурт апат çисе пăранчĕ. Пуçларĕ Урине хăй шутласа кăларнă юмаха каласа пама, тĕлĕнтерме.

Хĕртсуртăн кулса вăйĕ пĕтсе çитрĕ. Урине юрă хыççăн юрă шăрантарма пуçларĕ. Савăнăçлине, хурлăхлине, вăраххăнрах, шăппăнрах. Хĕртсурт хăй те сисмерĕ, çывăрса та кайрĕ, тет.

Урине шăппăн алăка уçрĕ те тухса тарчĕ, тет. Хĕртсурт сиссе те юлаймарĕ, тет.

Çавăнтанпа Урине йăлтах улшăнчĕ. Килти ĕçе мĕн пултарнă таран хăй тума пуçларĕ, тет. Халĕ ашшĕ-амăшĕ те ăна Урине тесе мар, «Иринушка» та «Ирина» тесе çеç чĕнеççĕ, тет.

* * *

Ирина Зотова

## МАРИНЕПЕ ПĂШИ

Пурăннă пулать-ха карчăкпа старик. Марине ятлă хĕр пулнă вĕсен.

Пĕррехинче ăна тантăшĕсем çырлана чĕннĕ. Ашшĕпе амăшĕ хĕрне хыттă асăрхаттарнă, асăрханса çӳреме хушнă. Малтанах Марине вăрманта хĕр ачасемпе пĕрлех çӳренĕ. Анчах пĕр тĕмĕ патĕнче чи хитре чечек çинче ыйтарайми

лĕпĕш курнă. Тытасшăн пулса çав лĕпĕше хăвалама тытăннă та çĕтсе кайнă. Марине хăрушлăха сиссе кăшкăрнă-кăшкăрнă – ăна никам та хирĕн сасă паман. Çав вăхăтрах ун патне пăши йăпăртатса пынă та:

- Ырă хĕрĕм, мĕншĕн йĕретĕн? – тесе ыйтнă.

- Мĕншĕн йĕрес мар-ха манăн, лĕпĕш хыççăн чупса хĕр тантăшсенчен çĕтсе кайрăм, - ăнлантарнă Марине.

- Эпĕ сана пулăшăп-ха, анчах эсĕ мана уншăн ылтăн чечекпе ылтăн лĕпĕш тупса пар, - тет пăши.

- Чим-ха, - шухăша кайнĕ хĕр ача темĕн аса илсе.- Çав чечекпе çав лĕпĕш марччĕ-ши пĕр тĕмĕ патĕнче курни?

- Шăпах çавă, - хĕпĕртенĕ пăши.

- Анчах мĕн тăватăн вĕсемпе? – тĕлĕннĕ Марине.

- Çав чечекпе лĕпĕш мана çын пулма кирлĕ, - ăнлантарнă пăши.

- Мана тухатмăш хайне итлеменшĕн пăши туса лартрĕ. Çав чечекпе лĕпĕше çунтарса ярсан çеç эпĕ çын пулăп.

Марине, ырă кăмăллăскер, пулăшать, пăшие çын пулма. Чăнах та унтан питĕ чипер каччă пулах тăрать.

Каччă хĕр ачана килне çитиех ăсатса ярать. Марине аппăшĕпе амăшне вăрманта хайĕнпе мĕн пулса иртни çинчен каласа парать паллах. Нимĕн те пытармасть.

Марине сăнĕпе хитре пулнă çав. Ĕçчен тата. Юратса пăрахать ăна каччă. Халĕ те пулин лайăх пурăнаççĕ тет.

## ПУКАНЕ

Пĕр çемьере аппăшĕпе йăмăкĕ питĕ туслă пурăннă. Анчах пĕррехинче амăшĕ йывăр чирлесе ÿкнĕ. Пĕртăвансен амăшне питĕ сыватас килнă, анчах нимĕнпе те пулăшайман.

- Хĕрĕмсем, манăн çĕр çырли çиес килет, вăрмана кайса татăр-ха, - тет амăшĕ. – Вара, тен, сывлăхăм та лайăхланĕ.

- Кĕтернепе Натали пĕчĕк карçинкка йăтса вăрмана каяççĕ. Чылайччен çÿреççĕ çырла шыраса. Пĕр уçланкăра ăна вĕсем самаях татаççĕ. Карçинкки вара тулмасть-ха. Çÿресен-çÿресен Кĕтернепе Натали çухалса каяççĕ.

- Ĕшнере вĕсем питĕ интереслĕ пуканене тĕл пулаççĕ. Хăйĕн пуçĕ чечекрен, кĕлетки йăлт çулçăсенчен. Тумтирĕ çинче тĕрлĕ-тĕрлĕ ÿсентăран.

Пукане хĕрачасене хăйĕнпе паллаштарать. «Эпĕ çĕр çинчи мĕнпур чир-чĕртен сыватма пултаратăп», - тет.

Хĕрачасем савăнса каяççĕ – вĕсене çавă çеç кирлĕ. Ăна хăйсен хуйхи-суйхи çинчен каласа параççĕ.

- Эпĕ сире хăçан кирлĕ, çавăн чухне уя тухса «пукане!» тесе кăшкăрăр, тÿрех сирĕн пата пырăп, - тет пукане. – Анчах ман çинчен никама та ан калăр. Килĕшрĕмĕр-и?

- Пĕртăвансем çапла тăваççĕ те. Пукане асамлă пулнă-мĕн. Чăнах те темиçе кунран вĕсен амăшĕ сывалнă та тет.

* * *

Алина Зотова

## МĔНШĔН КУШАК ПУРТРЕ ПУРĂНАТЬ, ЙЫТĂ – КАРТИШĔНЧЕ?

Ĕлĕк авал кушак та, йытă та пÿртре пĕрле пурăннă, тет. Пĕр ирхине кушакпа йытă шăмăшăн хирĕçсе кайнă. Манăн вăл та, манăн вăл тет. Иккĕшĕ те хăйсен кил хуçине юрама тăрăшнă, мĕншĕн тесен кашнин ăшăрах та çемçерех вырăн йышăнас килнĕ. Йыта каланă: «Мана хуçа ытларах юратать, сунара та пĕрле илет». «Çук, - хирĕçленĕ кушак, - мана ытларах юратать. Эпĕ епле çемçе çăмлă, ачашланатăп унăн çумĕнче, мăрлататăп». Килĕшмен ку сăмахсем йытта. Вăл вара тарăхнипе кушака уринчен çыртнă. Çакна кил

хуçи курнă. Йыттă картишне илсе тухнă та: «Санăн вырăну малашне çакăнта пулĕ», - тенĕ. Çавăнтанпа йытăпа вĕсем кушак уйрăм пурăнаççĕ, пĕр-пĕринпе килĕштереймеççĕ, тĕл пулсан вăрçаççĕ.

## МĔНШĔН ЙЫТĂСЕМ ШКУЛА ÇУРЕМЕÇÇĔ?

Пĕр йытă хăйне ăслă туйнă та шкулта вĕренме шутланă. Анчах вăл пĕр вырăнта ларма пултарайман.

Пĕррехинче çак йытă шкула пырсан урине парта çине хăпартса хурать. Вĕрентекенĕ ăна асăрхаттарать: «Уруна парта çине хăпартса ан хур» - тесе калать вăл.

- Мĕншĕн хăпартса хумалла мар вара? Эпĕ кунта пуринчен тăнли, - тет йытă.

- Эсĕ пуринчен тăнли? – тĕлĕннĕ учитель. – Мĕншĕн çапла шутлатăн?

- Эпĕ кил-çурта сыхлатăп, йĕр тăрăх вăрăсене тытатăп, хама валли апат та хамах шыраса тупатăп.

- Эсĕ темĕн тума та пултаратăн иккен, анчах та хăвне йĕркеллĕ тытма пĕлместĕн, - асархăттарса каланă ăна вĕрентекен.

Йытта темĕнле ăнлантарсан та вăл парта хушшинче тĕрĕс ларма вĕренеймен. Мĕншĕн тесен унăн аллисем çук, урисем кăна.

Пăрахрĕ тет вара кăшт тăрсан йытă шкула çӳреме.

## УРКЕНМЕСЕН ТЕЛЕЙЛĔ ТЕ ПУЛĂН

Пĕр çемьере виçĕ ывăлпа пĕр хĕр çитĕннĕ. Арçын ачасем питĕ чипер сăнлă пулсан та чăтма çук кахал пулнă. Çавăнпа та çитĕнсен вĕсене таврари пĕр хĕр те качча пыма килĕшмен. Ульяна йăмăкĕ хитре пулмасан та пуриншĕн те пĕчченех тăрăшнă хуçалăхра. Анчах юратман ăна пиччĕшĕсем. Ашшĕпе амăшшĕ вилсен Ульяна тăван килтен хуса хăваласа кăларса янă.

Хуйхӑра-хуйхӑра Ульяна вӑрманалла ҫул тытать. Утсан-утсан ҫывӑхра пӳрт ларнине курать. Шухӑшласа тӑмасӑрах кӗрет вӑл ҫав пӳрте. Кунта пӗр карчӑкпа старик тата ҫитӗнсе ҫитнӗ ывӑлӗ пурӑннӑ. Йӑван тесе чӗннӗ ӑна. Ульяна вӗсене хӑйӗн терчӗ-нуши ҫинчен йӗре-йӗре каласа парать. Илеҫҫӗ вара ӑна усрава вӑрман ҫыннисем.

Пӗррехинче Ульяна ҫырла татса ҫӳренӗ чухне Чике старике курах каять. Ӑна мӑйӗ тавралла ҫӗлен яваласа лартнӑ, пӑвса вӗлерме хӑтланнӑ. Анчах асамҫӑ старик вилӗме парӑнман, ҫӗлене илсе пӑрахма та унӑн вӑйӗ ҫитмен. Ӗҫчен те ырӑ кӑмӑллӑ Ульяна пӗр шухӑшласа тӑмасӑрах ҫӗлене патакпа Чике старик ҫинчен илсе ывӑтать. «Эсӗ ырӑ хӗр ача, мана вилӗмрен ҫӑлтӑн, ҫавӑнпа та мӗн ыйтнине йӑлтах пурнӑҫлӑп», - тет Чике. Ульяна хӑйӗн ӗмӗчӗпе паллаштарать ӑна. Сасартӑк Ульяна никам курман тӗлӗнмелле чипер хӗр пулса тӑрать. Пӗрре курнипех ӑна Йӑван юратса пӑрахать, кӗҫех качча илет. Телейлӗ пурнӑҫ пуҫланать Ульянан. Унӑн виҫӗ пиччӗшшӗ вара, тӳсме ҫук кахал пулнӑран, ашшӗ-амӑшӗн мулӗ пӗтсенех выҫӑпа вилнӗ тет.

* * *

Алёша Зотов

## ПӖР ШКУЛТАН ҪЫРАҪҪӖ

\- Ан хӑрӑр манран! Эпӗ сире тивмӗп. Эпӗ ырӑ динозавр, - терӗ Пиневер.

Анчах ӑна никам та илтмерӗ. Пурте паҫӑрах тарса пытаннӑ. Динозавр ҫури уткаласа ҫӳрерӗ, кӑштахран ешӗл курӑк ҫине тӑсӑлса выртрӗ.

Ӑнсӑртран вӑл шари! ҫухӑрса ячӗ. Вӑл чӗрӗп ҫине выртнӑ иккен.

Чӗрӗп чӗтрекен сасӑпа: «Кам эсӗ?» – тесе ыйтрӗ.

- Эпĕ динозавр ҫури. Пиневер ятлă, - терĕ Пиневер. – Атьăр пĕрле вылятпăр.

Чĕрĕп ҫурипе Пиневер ытти чĕр чунсене шырама тытăнчĕҫ.

- Манăн хырăм выҫрĕ, - терĕ Пиневер.
- Манăн та, - терĕ чĕрĕп ҫури.

Пиневер ватă юманăн ҫулҫисене ҫăвара хыпма тăчĕ ҫеҫ, такам: «Ай-ай-ай!» – тарĕ.

Унта пакша ҫури пулнă-мĕн. Вăл Пиневертен пытанас тесе юман ҫулҫисен хушшине пытаннă пулнă.

Пакша Пиневере: «Эсĕ пире ҫиесшĕн-и?» – терĕ. Пиневер ҫапла каларĕ: «Эпĕ сире тивместĕп, - терĕ. – Эпĕ сирĕнпе туслашасшăн».

Чĕр чунсем килĕшрĕҫ. Вара вĕсем виҫҫĕн алла-аллăн тытăнса ытти чĕр чунсене шырама кайрĕҫ. Анчах никама та тупаймарĕҫ. Каҫ та пулчĕ. Пиневер тата унăн тусĕсем ҫывăрма выртрĕҫ.

Вĕсем ирех вăранчĕҫ, ҫула тухрĕҫ. Кайсан-кайсан вĕсен хырăмĕсем выҫрĕҫ. Вĕсем апат ҫикелерĕҫ те ватă юман айне канма выртрĕҫ. Динозавр ҫури выртма ĕлкĕрчĕ ҫеҫ, такам: «Анне!»! – тесе ҫухăрса ячĕ. Ҫухăраканни мулкач ҫури пулнă.

Динозавр ҫури:

- Кам эсĕ? – тесе ыйтрĕ.
- Эпĕ мулкач ҫури, - терĕ мулкач ҫури.
- Вăл пире тивмĕ, терĕ чĕрĕп ҫури. – Вăл пирĕн юлташ. Пĕр-пĕринпе паллашнă, вылякаланă хыҫҫăн кăнтăрла та ҫитсе пычĕ. Чĕр чунсен ҫăварĕсем типсе кайрĕҫ.
- Ҫак тĕмсем хыҫĕнче юхан шыв пурччĕ пулмалла, - терĕ мулкач ҫури.

Туссем тĕмсем хыҫнелле кайрĕҫ. Сасартăк мулкач ҫури: «Ой!», - терĕ.

Вăл тĕмсем ăшне кĕрсен, тилĕ ҫури ҫине пырса тăраннă-мĕн.

- Кам эсӗ? – ыйтрӗ тилӗ ҫури.
- Эпӗ Пиневер. Эпӑ сирӗнпе туслашасшӑн.

Вара вӗсем тӑваттӑн ҫула тухрӗҫ…

Шырасан-шырасан кашкӑр ҫури те, упа ҫури те тупӑнчӗ. Туссем пӗр-пӗринпе выляҫҫӗ, анчах та динозавр ҫури яланах кусене кӳрентерет (хӑй «кӳрентермест тесе калать пулин те). Хӑй ҫине ярӑнтарма лартать, хытӑрах чупать те, хӑшӗ те пулин ӳксе юлать, ыраттарать. Пытанмалла выляҫҫӗ —каллех кӳренмелли тупӑнать, Пиневер ниҫта та пытанаймасть, тӳрех ӑна кураҫҫӗ, унӑн яланах шыраканни пулмалла. Тытмалла вылянӑ чухне вӑл тӳрех пурне те тытать, вӑйӑ тӳрех пӑсӑлать.

Пӗр каҫхине динозавр ҫури хӑйӗн кулянӑвне тусӗсене пӗлтерчӗ, хӑй кӑштах пӗчӗкленесшӗн пулнине пӗлтерчӗ. Чӗр чунсем пӗр-пӗринпе канашларӗҫ. Кашкӑр ҫури:

Эпӗ шурлӑхри пӗр ҫырлана пӗлетӗп, вӗл ӳпре-шӑнана пӗтерет, пӗчӗклетет, тен, динозавра та пулӑшӗ? – терӗ. Кӗҫех кашкӑр ҫав ҫырлана тупса килчӗ. Чӗр чунсем Пиневера ҫак ҫырлана ҫисе пӑхма сӗнчӗҫ. Лешӗ килӗшрӗ. Пӗр ываҫ ҫырлана ҫӑвара хыпрӗ ҫеҫ:

- Ой-ой-ай-ай! – тесе ҫухӑрма пуҫларӗ. Пӗр чарӑнми кӑшкӑрать, пуҫне пӑркалать, малти урисене сулкалать. Суллярӗ-сулларӗ те – урисенче ҫунат пулса тӑчӗ, мӑйӗ пӗчӗкленчӗ, хӳри кӗскелчӗ. Динозавртан кайӑк пулса тӑчӗ. Пиневер ҫунаттисемпе суллакаларӗ те пӗлӗтелле вӗҫсе кайрӗ. Чӗр чунсем ҫӑварӗсене карса тӑрса юлчӗҫ.

# ТУПМАЛЛИ

Тĕп турĕç ................................................................................ 2
Асамлă ала ................................................................................ 4
Çулçуревçĕ аслати ...................................................................... 5
Мĕншĕн шурă упа çурçĕрте пурăнать? ............................................ 5
Мулкач курăк çиме вĕренчĕ .......................................................... 7
Йывăçа сыватрăмăр ..................................................................... 8
Кашни пулăмăн хăйĕн вăхăчĕ ........................................................ 10
Кампурпа Шарик ........................................................................ 11
Урине-кăткă ............................................................................... 12
Çăмламас .................................................................................. 13
Вăрман патши патĕнче хăнара ...................................................... 15
Йĕрмĕш купăс ............................................................................ 19
Ытлашши ан хапсăн ..................................................................... 20
Тыр – пуллă та пулчĕ, укçаллă та .................................................. 21
Хĕртсурта улталани ..................................................................... 23
Маринепе пăши .......................................................................... 25
Пукане ...................................................................................... 26
Мĕншĕн кушак пӳртре пурăнать, йытă – картишĕнче? ........................ 27
Мĕншĕн йытăсем шкула çуремеççĕ? ............................................... 28
Уркенмесен телейлĕ те пулăн ....................................................... 28
Пĕр шкултан çыраççĕ ................................................................... 29

Галина, Ирина, Алина, Алёша

## ЗОТОВЫ

# Çемье кăшăлĕ

Юмахсем

Набор, компьютерная вёрстка **Е.В. Камаев**

Сдано в набор 08.08.2000. Печать оперативная.
Объём 2 п.ч. Заказ № 201. Тираж 1000 экз.

Отдел оперативной полиграфии Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я.Яковлева
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Зотова Галина Вячеславовна 1956 çулхи раштаван 1-мӗшӗнче Етӗрне районӗнчи Кӑкшӑм ялӗнче çуралнӑ. Палтайри вӑтам шкула пӗтернӗ хыççӑн И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӗ. 1980-мӗш çултанпа Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Штанашра вӑтам шкулта акӑлчан чӗлхи вӗрентет. Мӑшӑрӗпе виçӗ ача пӑхса ӳстереççӗ. Ирина педуниверситетӑн II-мӗш курс, Алина – I-мӗш курс студентки. Алёша – тӑваттӑмӗш класра вӗренет. Г.В. Зотова тӗрлӗ хаçат-журналпа туслӑ çыхӑну тытать. Вӑл 1996 çулпа «Çилçунат» журналӑн Трубина Мархви ячӗллӗ премине тивӗçнӗ.

«Çемье кӑшӑлӗ» – авторӑн пӗрремӗш кӗнеки.